АВТОГРАФ

ЧР Патшалăх премийĕн лауреачĕ,
ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ

# Марина Карягина



# Тăван халăхăн ыратăвĕ – манăн суран

**Телеэкрансене тухакан çын куракансен алă лаппи çинчи пек - нимĕн те пытараймастăн. Хăвăнтан ытларах хитре те, хăвăнтан ытларах ăслă та, хăвăнтан ытларах пултаруллă та пулаймастăн. Халăх хăй курать, хаклать, виçет, вара е йышăнать сана, е эсĕ уншăн текех нимĕнле пĕлтерĕшлĕ те мар. Чăваш телекуравĕнче 22-мĕш çул ĕçлекен Марина Карягина мĕн ăслă, мĕн чунлă, мĕн кăмăллă пулнине пирĕн халăх тахçанах пĕлсе çитнĕ. Тĕрĕссипе, вăл халăх куçĕ умĕнче çитĕннĕ, çын пулнă, халăхран ăс илсе, халăх чунне ăшне хывса. Çавăнпа тăван халăхĕн ыратăвĕ унăн чун суранĕ пулса тăнă. Çав суран ăна сăвăсем, калавсем, пьесăсем çырма, телевидением чунне парса ĕçлеме хистет.**

*Марина Федоровна КАРЯГИНА 1969 çулхи юпа уйăхĕн 16-мĕшĕнче Патăрьел тăрăхĕнчи Кивĕ Ахпӳрт ялĕнче çуралнă. 1992 çулта Чăваш патшалăх университечĕн чăваш филологийĕпе культура факультетĕнчен вĕренсе тухнăранпах Чăваш телерадиокомпанийĕнче ĕçлет. Çирĕм çул ытла ачасем валли "Шевле", "Çăлтăрчăк" телекăларăмсем хатĕрлет, çитĕннисем валли эрнесерен уçă эфирта "Ирхи тĕпел" автор программи ертсе пырать. Унăн сценарийĕпе чăваш нацийĕн культура пурлăхĕпе чун пуянлăхĕ çинчен хăйне евĕрлĕ каласа кăтартса ӳкернĕ фильмсемпе передачăсем тĕнче шайĕнчи чылай телефестивальте малти вырăнсене йышăннă, "Шăпăрлансем" (Пока не все дома) фильмĕ ачасемпе çамрăксен кăларăмĕсен Пĕтĕм тĕнчери фестивалĕнче (1998ç.) тата "Сто лет спустя" фильмĕ Раççейри наци телерадиокомпанийĕсен "Голос Евразии" фестивалĕнче (2013 ç.) Гран-при те çĕнсе илнĕ. Икĕ сериллĕ "Хĕвел çулĕпе" (Дорога к солнцу) илемлĕ фильмĕ (И.Я. Яковлев ачалăхĕ çинчен), чăваш халăхĕн çулталăк çаврăмĕнчи йăли-йĕркипе çыхăннă ача-пăча мыскарисен ярăмĕ, "Çĕр çул иртсен", "Салтак" тата паллă ӳнер ăстисене халалланă ытти портрет-фильмĕсем Чăваш телекуравĕн ылтăн çӳпçинче упранаççĕ.*

*М.Карягина лирикăлла сăвăсем çырнисĕр пуçне чăваш литературине пуçласа поэма-палиндром кĕртнĕ. Прозăра та, драматургире те ăнăçлă, тухăçлă ĕçлет. Вăл çирĕме яхăн кĕнеке кăларнă. Паллăраххисем: 1996 çулшăн Чăваш Республикин Çамрăксен патшалăх премине тивĕçнĕ "Хум пăшăлтатăвĕ" (сăвăсем, 1995 çул), "Тăваткăл тĕлĕксем" тетралоги (2002), палиндром меслечĕпе çырнă поэмăсемпе сăвăсен икĕ томлă пуххи: "Юрăсăр уй" (чăвашла), "На реке ран" (вырăсла) (2007), республикăри чи вуланакан кĕнекесен йышне кĕнĕ "Хура тумлă арçын" (калавсемпе повеçсем, 2007 çул) тата ыттисем те.*

*Раççей писателĕсен союзĕн членĕ (1996), Раççей журналисчĕсен союзĕн членĕ (1997). Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ (2012), ЧР журналисчĕсен Çемен Эльгер ячĕллĕ преми лауреачĕ (2008). Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх Çамрăксен театрĕ сцена çине кăларнă "Кĕмĕл тумлă çар" сăвăлла трагедишĕн кăçал Чăваш Республикин Патшалăх премине тивĕçнĕ.*

## ПУÇЛАМĂШĔ

Манра мĕн пĕчĕкрен ĕненӳ пурăнать: çак çĕр мана ахальтен çуратман, çавăнпа ĕçлемелле те ĕçлемелле. Хăш самантра, кам хывнă чун-чĕрене çак иккĕленӳсĕр ăнланăва – калаймастăп. Кăна тĕшмĕртме кăна пулать. Анчах вăл мана хам сисмен чухне те ялан тĕревлесе тăнă.

Çут тĕнчере хам пуррине ăнкарса пынăçемĕн хĕвелĕн киле сăрхăнса-пайăркаланса кĕрекен витĕр сарăлăхĕ шутсăр кăмăла кайни асра – ку чуна тăнăçлăх туйăмĕ парса канăçтаратчĕ. Унтан эпĕ аттепе аннесĕр пуçне хамăн тĕлĕнмелле аслă та ăслă чунлă асанне, патша майри пек мăнаçлă мамай (асаннен амăшĕ), çăмăл машинине е мотоциклне кĕрлеттерсе хăнана килмессерен "чĕппĕм" тесе ытамĕнчен ями утьăкка сиктерекен тĕнчере çук ырă кукаçи, чечексен кăмăлне уйрăм сисĕмпе туякан çепĕç кукамай пурришĕн хама Телей çупăрланине хальхи пек астăватăп. Тавралăх çакăн пек тараватлăхпа, пысăк юратупа кĕтсе илчĕ пулсан, епле шутлаям-ха темле çăлтăр çинчен пач ăнсăртран персе аннă-мĕн эп тесе.

Пурнăçăмăн пуçламăш тĕвви – çапла.

Аттепе анне иккĕш те çемйисенче асли пулса ӳснĕрен эпĕ те пуриншĕн те чи-чи пĕрремĕшчĕ: пĕрремĕш ача, пĕрремĕш мăнук... Чи тутлă юратăвĕ çавăнпа мана тивнĕ пулас. Тата аттен нумай пулмасть çартан таврăннă шăллĕ, Петя тете, мана ялан пĕрле çавăтса çӳретчĕ. Эпир унпа вута та, шыва та кĕнĕ. "Тетӳ çумра чухне нимрен те ан хăра, маттурăм", – тетчĕ вăл. Шиклентерĕн мана! Сехĕрлентерекен самантсене хапăллаттăм кăна. Çурта электричество илсе кĕрекен янн! янрамăш пралуксем патне хăпарса çан-çурăм сӳ-ӳ! сӳ-ӳ! тунине туйса ларни те пĕрре мар пулнă... Пĕрмай çĕнĕлĕх уçассишĕн ăвăнса хӳмесем, çуртсем çинче "тĕреме тăрриленсе" çӳренĕрен анне мана "арçын аппа" тесе вăрçатчĕ. Атте ун чухне, кĕрнек кĕлеткеллĕ, лăпăс-лапăс вăрăм çӳçлĕ, хăй калашле "музыкăсăр пурăнма пултарайман", таврари библиотекăсенче вуламан кĕнеке хăварман çирĕм çиччĕ-çирĕм саккăрсенчи арçын, колхозра лаша пăхатчĕ. Иккĕрех ашшĕсĕр юлса совет влаçĕ çука хăварнă çемьере çурма тăлăх ӳснĕрен унăн малалла вĕренме майĕ пулман. Вите çумĕнче хурал пӳрчĕ пурччĕ. Черечĕ çитмессерен атте утсене пăхма çĕр каçмаллах каятчĕ, мана пĕрле илетчĕ. Юмах каласа çывăрттарса яратчĕ те хăй кĕнеке вулатчĕ. Ир енне ыйхăран вăраннă-вăранман витене тухса çаврăнаттăмăр. Сăмси шăтăкĕнчен тухакан сывлăшĕпех мана, пĕчĕкскере, ĕмсе илессĕн майне тăсакан ăйăрсем, канлĕн тĕлĕрсе тăракан ĕç лашисем, çăварлăх тутине пĕлмен йалтти-ялтти тихасем - кашнине сăнран астуса юлнă пек халь те, вĕсенчен мĕнле шăршă кĕни – йалт асра. Эпĕ урхамахсен пысăк та айăпсăр куçĕсене сăнама юрататтăм: вĕсенче













*• Ватă асанне – Ольга Афанасьевна Плешкова. 1973 ç., Кăрлач, 13.*
*• Асанне – Лидия Степановна. Эпĕ – 3 çулта. Алăра нихçан выляса курман пукане. 1973 ç., кăрлач, 13.*
*• Майралла тумланнă асанне Мускавра çарта тăнă кĕçĕн ывăлĕпе (Петя тетепе). 1960 çулсен вĕçĕ.*
*• Анне – Зинаида Петровна. 1960 çулсен вĕçĕ.*
*• Атте – Федор Федорович. 1960 çулсен вĕçĕ.*
*• «Чăваш пики» конкурс. 1992 ç.*

---

тавралăх ўкерчĕкленетчĕ... Хурал пўртĕнчи çĕрсем хальччен пĕлмен асамлăхпа тулнăччĕ! Урăх çакна тĕнчери пĕр хĕр ача та туйманах: авалтан унта хĕрарăмсем çўрес йăла пулман. Аттен каçăхтарса яракан юмахĕсене шăпах çакăнта итлеттерсе пăхтарас тесе пĕррехинче виçĕ сыпăкри аппана пĕрле илĕртсе кайрăм – çук, килĕштермерĕ: те çурçĕр иртсен хăюллăн каштăртатса çўрекен йĕке хўресенчен хăраса сехри хăпрĕ?.. Пĕчĕк "арçын аппашăн" вара

хурал пӳрчӗ ахаль мар тӗнчеччӗ! Килти ӗҫрен пушансан кунта ялти шухӑшлавҫӑсем ҫӗршыври лару-тӑру ҫинчен калаҫма пуҫтаранатчӗҫ. Чи малтан уйрӑм киленӳпе тӑвакан ӗҫӗ пурччӗ вӗсен: кивӗ хаҫата хӑю евӗр чӗрсе илетчӗҫ те ун ҫине килте ҫитӗнтерсе вӗтетнӗ табак сапатчӗҫ, асӑрханса валашкалататчӗҫ, пӗтӗрсе сурчӑкпа ҫыпӑҫтаратчӗҫ. Атте чикарккӑ туртнине астумастӑп, каярах та ытла чаплӑ кӗнеке аллине лексен ҫеҫ пирус тыткаланине асӑрханӑ: ҫӑлтӑрлӑ тӳпе айне тухса ларатчӗ те картиш хунарӗн ҫутинче техӗмлӗн тӗтӗм вӗркелесе вулатчӗ. Кивӗ Ахпӳрт арҫынӗсен шухӑша путса тӗксӗмленнӗ е хӗрӳ тавлашура ялтӑр хыпса илнӗ сӑнарӗсем халь те чӗррӗн куҫ умне тухаҫҫӗ: лавкка кӗпипе, килте ҫӗлетнӗ шупка хура шӑлавар пӗҫҫисене вӑрӑм кунчаллӑ шурӑ ҫӑм чӑлха ӑшне хутлатса чикнӗ...

Аттепе Петя тете мана мӗнпур арҫын ӗҫне явӑҫтаратчӗҫ, мунчана та эпӗ тӑваттӑмӗш класа кайма пуҫличченех пӗрле ҫӳренӗ, пӗрле ҫывӑрнӑ. Вӗсем тӗрлӗ ҫынсемччӗ. Тете ман пултарулӑха шкул ҫулне ҫитиччёнех пур енлӗн тӗрӗслесе, хавхалантарса тӑратчӗ, уншӑн тесен "Маришаран ӑслӑ, маттур ача" урӑх пулман. Атте паянхи кунччен те мана мухтаса ҫӑвар та уҫса курман. Ҫитӗнӳсемшӗн савӑннине те палӑртмасть – ҫапла кирлӗ те пек, вӑл манӑн шӑпа кӗнекине хӑй ҫырса хунӑ тейӗн. Ҫырман тени чӑнах та йӑнӑш пулӗччӗ. Халӑх сӑмахлӑхӗн пуянлӑхне, чӗлхемӗр илемне туясси асаннерен куҫнӑ пулсан (эпӗ кун пирки чылай интервьюра каласа панӑ), вулав, шухӑшлав, пӗлӳ енне туртӑнасси пӗтӗмпех аттерен пуҫланнӑ. Эпӗ вӑл кӗнеке тытмасӑр апат ҫинине нихҫан та курман. Ҫывӑрма выртнине те. Вуланӑ май ун сӑнӗ епле улшӑннине сӑнасах пуҫламӑш классенче вӗреннӗ чухне хулӑн романсем вулама хӑнӑхса кайрӑм. Пире, "ҫӗрӗпе ҫвет ҫунтарса куҫ ҫутине пӗтерекенскерсене", чарса чарма ҫукчӗ. Шашка-шахмат патне илентересси те ҫаплах сисӗнкӗсӗр пулса иртнӗччӗ. Эпӗ ӑҫта куҫарассине шухӑшласа кӑларнӑ ҫӗре атте пӗр вунӑ страница вуласа ӗлкӗретчӗ, кассӑн-кассӑн ӳкӗннӗ пек туса юриех "выляса яратчӗ". Ҫакна вӑл питӗ ӗненмелле тӑватчӗ. Эх, савӑнӑҫӑн вӗҫӗ-хӗрри ҫукчӗ ун пек самантсенче!

Нумай сӑмах ваклама юратман атте эпӗ ҫуралсан: "Куна халех виҫҫӗллӗ калуш кирлӗ", - тесе хунӑ тет. Хӗрӗ арҫын ача пек пысӑк ҫуралнине кура. Ҫапла вӑл мана тӳрех ывӑл вырӑнне йышӑннӑ, ҫавӑнпах арҫын ачалла ӳстерчӗ-тӗр. Каярах вӑл строителе вӗренчӗ те эпӗ пӗрремӗш класра чухне тӗп килтен уйрӑлса тухса ҫурт лартсан мӗнпур хуралтӑ таврашне, ҫуллахи пӳрте хулленхуллен килйыш вӑйӗпех ҫӗклерӗ. Хайсенчен кӑшт кӑна пӗчӗкрех витрепе раствор сӗтӗрекен, кирпӗч йӑтакан икӗ мӗкӗлти хӗрача ҫине иртен-ҫӳрен хӗрхенсе пӑхатчӗ. "Федя, хӗрӳсем ӳсеймесӗр юлаҫҫӗ ак е хӗсӗр пулаҫҫӗ...", – тетчӗҫ час-часах. Атте хӑлхине те чикместчӗ – пире ҫапла майпа йывӑрлӑха тӳсме вӗрентетчӗ. Ачашка, йӑваш, кахал пуласран. Эпир ытти шӑпӑрлан пек хирте сухан-ҫевок, чӗкӗнтӗр пайӗ ҫинче нушаланман. Утӑ ҫулса та, ӗне суса та курман. Ман алӑра мӗн пӗчӗкрен пуртӑ-мӑлатук та ручка-кӑранташ пулнӑ – йӗппе ҫип тавраш тытнине курсан "ӗҫсӗр аптӑраса ан лар" тесе пӗрле ертсе тухатчӗ. Калемӗ, хам пӗчӗкрен суйласа илнӗскер, чухах пулчӗ-ха, пуртӑ-мӑлатукӗ вара... вӗсен "арҫынла ҫирӗплӗхӗ" кӑмӑла куҫрӗ пулинех. Хӗрарӑм ӗҫӗ маншӑн ютах юлчӗ.



*«ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ» ят панă самант. 2012 ç.*

Ача чухнехи çара ура йĕррисене усракан, такăнса ÿксе суранланмассерен юхнă юнăмăн тутине астăвакан тăпра... Кивĕ Ахпÿртĕн çав урамĕ сăваплă та асамлă маншăн. Тĕп кил выранне çитсе чарăнмассерен хай кăкăрĕ çинче вылятса ÿстернĕ çĕр çине ярса пусмассерен унăн уйрăм хăватне ура тупанĕпе туятăп... Хам утмастăп та тейĕн – вăл мана темле... хай çĕклесе пырать. Пурăнма, ĕçлеме çĕнĕрен вăй-хал парать. Ваттисемпе тан, атте-аннепе пĕрле пиллесе тăрать. Çав тăпра ман чĕре варрине те кĕрсе юлнă: шалти тĕнчемри ачалăх утравĕ вăл. Эпĕ кирек ăçта çитсен те манпа пĕрле. Тата... çав тăпра мана кĕтет. Хăй мĕн халалланине тăван халăхăма тĕппипе таварса парса таврăнасса кĕтет. Çакă манăн чи пысăк парăмăм, чи çÿллĕ тивĕçĕм.

## ТЕЛЕКУРАВ – ШĂПА

Шкулта вĕреннĕ çулсенче эпĕ ялан шухăшлă, шăпăрт çÿрекен "ĕçлĕ" хĕрачаччĕ. Хама манер. Ыттисенчен уйрăм. Тантăшсемпе хутшăнма, шÿтлесе кулма питĕ йывăрччĕ, анчах ку мана хуçман. Пĕчченлĕхре "хам тĕнчене" малалла аслăлатма пулăшнă кăна-тăр. Тус сахал та юлташ нумай пулнă. Республика пичетĕнче адреса тупса таçти-таçти ачасем те çыру яратчĕç. Нумай пĕлессишĕн ăнтăлнă, пысăк кăсăкланупа вуланă, çырнă, хайланă, тете хăнăхтарса янă "маттур!" сăмаха çĕре ÿкересрен асăрханнă...

Мана яланах чи лайăх вĕрентекенсем лекнĕ тесе шутлатăп. Ку – телеех. Пĕрремĕш учитель тивĕçлĕ канăва кайма хатĕрленекен Елизавета Семеновна Савельева-Логунова пулнишĕн те питĕ хĕпĕртетĕп: асаннепе мăн асаннен этнопедагогики хыççăн çамрăккисене ăнланма йывăртарахчĕ мана. Пĕррехинче, виççĕмĕш класра чухне, пире вĕрентме темиçе кунлăха Мария Ивановна Артемьева килчĕ. Куçран алмас пек касса пăхакан ирĕк кăмăллă, хăюллă хĕрарăм. Аллинчи кĕнекине инçете тăсса вулать те сăмси çине утлантарнă куçлăхĕ çийĕн

пирӗн ҫине витӗррӗн пӑха-пӑха илет... Ҫав кунсенче ман ҫине тӗллесе тӗк тӑмалӑх темиҫе хут та: "Каларӗ тейӗр, сирӗн класри ҫак хӗрача ахаль йышши мар-ха вӑл, пысӑк ҫын пулать, курӑр ак..." - тее-тее хучӗ. Эпӗ аптранипе ӑнтан кайнӑччӗ. Ҫак сӑмахсене тантӑшсенчен никам та астумасть пуль, хӑй те маннӑ пуль, анчах хамӑн асра тӗлӗнӳ пек ӳкерӗнсе юлнӑ. Мӗншӗн тесен вӑл ман пирки ҫапла калакан иккӗмӗш ҫын пулчӗ. Малтан, шкула ҫӳреме пуҫличченех-ха, пирӗн патра пӗр вӑхӑт пурӑннӑ суккӑр Партизан йысна калатчӗ. (Унӑн сӑнарӗ "Ылтӑн пан улми" кӗнекемре те пур.) Ҫак сӑмахсем мана кӑштах та пулин хама хам ытларах ӗненме те пулӑшнӑ-и, тен?..

Телепередачӑсем пӑхса ларма ман вӑхӑтӑм та юлмастчӗ, кӑмӑлӑм та питех пулман. Экранри хитре майрасем мана "янкӑлтатма" ҫеҫ тухса ларнӑн туйӑнатчӗҫ. Ун чухне эп шухӑшласа илме те пултарайман хамӑн пурнӑҫ та тӳрремӗнех телекуравпа ҫыхӑнасса!

1992 ҫул. Ҫӗршыври арпашу, нишлӗх... Эпӗ Чӑваш патшалӑх университетӗнчен вӗренсе тухатӑп. Журналист, филолог. Пирӗн тӗле ҫӗнйӗркелӳ тапхӑрӗ хальччен пулман тамаша кӑларса тӑратрӗ: ирӗклӗ диплом, хӑть те ӑҫта кайса ӗҫе вырнаҫӑр. Чӗрере пӗрех лӑпкӑ. Хаҫат-журналсем ман пултарулӑха ачаран пӗлеҫҫӗ, ҫулсерен темиҫе уйӑхшар практикӑра пулса тӗрӗсленнӗ, йыхравлакансем те пур. Темшӗн ниҫталла та чун выртмасть. Хусанкай ячӗллӗ керменте режиссерта ӗҫлекен Тимӗр Карсаков ентешӗм мана, студент чухне ун патӗнче чӑвашла поэзипе музыка каҫӗсем ертсе пынӑскере, хисте-хисте чи пӗрремӗш "Чӑваш пикине" хутшӑнма ӳкӗте кӗртнӗччӗ. Вӑлах: "Телевиденире конкурс пырать, сан каймалла унта", – тет хайхи яланхилле пӗр иккӗленӳсӗр. Телерадиокомпани пуҫлӑхӗ хӑй тейӗн. Яхӑнне те ямастӑп. Тимӗр пурнӑҫа юмаха ҫаврӑнса илӗртме пӗлет: "Иксӗмӗр те кайса вырнаҫатпӑр та чӑвашла киносем ӳкерме пуҫлатпӑр!" – тет. Ӗмӗчӗ маншӑн ытла илемлӗ пулса кайрӗ те, ҫийӗнчех ӗҫлес кӑмӑл ҫӗкленчӗ!

Кайрӑм телекурава. Курнӑ-курман хӑпӑл-хапӑл илсе ямарӗҫ. Конкурсӗ питӗ пысӑк терӗҫ. Арҫын илме палӑртни те сисӗнчӗ. Ҫапах мана пӗр хӗрхенӳсӗр тӗрӗслеме пуҫларӗҫ. Тележурналистика маншӑн пач ютчӗ. Асилес пулсан, виҫҫӗмӗш курсра чухнех "Эс телекуравра ӗҫлеме ҫуралнӑ" тесе ҫавӑтсах килекенсем пулнӑччӗ-ха: Зоя Никоноровапа пӗрле "Асамлӑ библиотекӑра" ятлӑ кӑларӑм уҫнӑччӗ те сценари ҫырса хамах ертсе пыма тытӑннӑччӗ. Ун чухнех мана штата илме тапратнӑччӗ – ҫӗршывра лару-тӑру пӑтранса кайрӗ. Хамшӑн ҫав тапхӑр пӗр ҫӗвӗк хӑвармасӑр хыҫа юлнӑччӗ...

Ишме пӗлмен ҫынна авӑра ывӑтнӑ евӗр, ҫӗнӗ хыпарсен программине ертсе пыма уҫӑ эфира кӑлара-кӑлара ячӗҫ. Акӑ ӑҫта кирлӗ атте хӗртсе шӑратнӑ характер! (Хурҫӑ кӑмӑл мана кӑшт маларах та, вилӗмпе куҫа-куҫӑн тӑма тивсе тапранайми ҫур ҫула яхӑн вырӑнпа выртнӑ чухне, питӗ кирлӗ пулнӑччӗ...) Ҫав ҫулсенче телевидени кӑларӑмӗ хатӗрлесси, ертсе пырасси темиҫе хут хӗнтерехчӗ: кинокамерӑпа перекетлӗ ӳкерме пултармалла, тӗттӗм пӳлӗмре кинопленкӑна каса-каса монтаж тумалла, магнитофонпа ҫырса килнӗ сасса ӳкерчӗкпе ҫыхӑнуллӑн пӗрлештермелле... Кадр хыҫӗнчи текста вара ертсе пыракан хальхи пек малтанах пленка ҫине ҫырса памасть, уҫӑ эфир пынӑ вӑхӑтра кӑна вулать –



*Пултарулăх каçĕнче. Икĕ енче – икĕ тăван: Федор Александровичпа (сулахайри) Сергей Афанасьевич (сылтăмри) Карягинсем. 2012 ç.*

эппин, унăн сюжет пуçламăшĕнчен тытăнса синхрон (интервью) таран, унтан тепĕр синхронччен епле пулсан та шăпах вырнаçмалла вулама тивет... Унтанпа çирĕм пĕр çул иртрĕ. Техника куç умĕнчех вăйлă аталанчĕ. Халь телекуравра ĕçлеме, ун чухнехипе танлаштарсан, питĕ меллĕ темелле: цифра камери, монтаж тумалли хатĕрсем, телесуфлер – пĕтĕм ĕç хăвăрт та çăмăллăн тăвăнать. Хăвăнта кăна чи кирли – пултарулăх – пултăр.

Телекурава эпĕ журналистика пек анчах мар, искусство тĕсĕ тесе йышăнтăм, тĕрлĕ енлĕхшĕн саврăм. Кунта вĕçĕ-хĕррисĕр çĕннине уçса аталанма, çул çӳреме, фестивальсене тухса Раççей е тĕнче шайĕнчи маçтăрсемпе калаçма, тăтăшах яла кайса тăван халăхăн тĕнче туйăмне тĕпчеме май пур – ку маншăн, çыракан çыншăн, темрен ытларах пĕлтерĕшлĕ. Хаклакан, чăрмантарман пуçлăх кăна пултăр. Сергей Павлов вăхăтĕнче манăн чи чăрсăр шухăшсене пурнăçа кĕртме май пулчĕ, Наталья Володина тапхăрĕ пултарулăха ирĕклетсе çирĕплетрĕ, Николай Григорьевпа унăн вĕрентекенĕ – çумĕ Венера Большова – мана тимĕр чĕреллĕ кĕрешӳçе çавăрчĕç, Елена Ижендеева çулсем иртнĕçемĕн мана пĕчĕккĕн ăнланса пынăн туйăнать-ха...



*Манăн юратнă вĕрентекенĕмсенчен пĕри – Мария Петровна Урукова.*

Ача чухне экранри "янкăлти майрасем" пирки йăнăшнă эпĕ, паллах. Кайран, куллен пĕрле тăрмашнăçем, вĕсенче чылай ырă ен уçрăм. Нихçан асран тухми




*13 çулхи хĕрĕм – Илемпи. Турци, Кемер хули, 2013, çурла.*



*19 çулхи ывăлăм – Айдар.*

ăстасемпе пĕрле ĕçлеме пўрнишĕн савăнатăп. Кашнине ятран асăнса тухăттăм, хăçан, мĕнле сăмахĕпе чĕреме хĕмлентернине каласа парăттăм – вырăн çитменнипе кама та пулин сиктерсе хăварасран асăрханатăп. Миçе ăру, мĕн чухлĕ çын килсе кайрĕ çирĕм пĕр çул хушшинче... Тĕрлĕ жанрпа, çĕрнекунне уями, вĕрин çунса, курăнман вутпа пĕр-пĕрне тивертсе, чупса çўресе, туйăмсен океанĕнчи чи кĕтмен хумсенчен шикленмесĕр ĕçлерĕмĕр эпир. Паян та йăвашланнине, çулсен йывăрăшне туймастăп. Йăсăрлану ман валли мар.

**ЛИТЕРАТУРĂСĂР ПУРНĂÇ ÇУК**

Телекураври канăçсăр ĕç, пăлтăр-палтăр кун йĕрки мана çыравçă пулма чăрмантараймарĕ. Хальччен пичетленсе тухнă кĕнекесене эпĕ ача çуратсан паракан отпускра, канмалли кунсенче, уявсенче е ыйхăсăр каçсенче çырнă. Хушма сехетсем паман-çке-ха çыравçăна Турă. Маншăн тесен ăнăçлă йĕркесем çыраннă кун – чи пысăк уяв. Кану та. Кану мар-ха, канăç. Чун-чĕрешĕн.

Çирĕме яхăн кĕнекем вулакан патне çитрĕ. Сăвă-поэма та, калав-повĕç те, пьесăсем те, ачасем валли çырнă хайлавсем те. Ырă çынсем пулăшу сĕннипе тухнисем те пур, Чăваш кĕнеке издательстви кăларнисем те нумай. Анчах литература уйĕнче пуçламан каçалăк умĕнче тăнăн туятăп. Поэзире уйрăмах "уçман çеремĕм" пуррине сисетĕп. Ачамсем пĕчĕк мар ĕнтĕ, вĕсен хăйсен интересĕсем, ал-урам салтăнса пырать, тен, малашне çырас ĕçе тарăнрах путма майсем пулĕç. Хальлĕхе литературăпа телевидение пĕрлештерсе тăракан тепĕр ўнер шутсăр илĕртет: фильмсем. Сценарист ĕçĕ те, режиссер ĕçĕ те. Тен, ўкерме те пуçлăп-и? Ăста-

лăх шайне фестивальсенче танлаштарса хак параççĕ – ку та шаларах та шаларах илĕртсе хавхалантарать. Тĕлĕнме, вĕренме, тĕпчеме манас марччĕ теп.

## ТĂВАН ХАЛĂХĂН СУРАНĔ – МАНĂН ЫРАТУ

Шухăшлавçисем пулсан – халăх пур. Пур-и пирĕн шухăшлавçăсем? Тĕрлĕ ăслăлăхăн доктор диссертацине хӳтĕленĕ ăсчахсем питĕ нумай, кандидачĕсем – кашни утăмра. Канăçсăрлантарать-и вĕсене тăван халăх шăпи? Туйăнсах каймасть. Пăшăрхантарать пулсан та, "чĕре ыратать..." шайĕнче кăна. Чĕре чăнах та ыратать. Анчах ку çителĕксĕр. Патшалăх тытăмне йĕркене кĕртсе кирлĕ çулпа илсе кайма хевте çитерекен çĕнĕ Шухăш кирлĕ. Мĕнлерех çав "кирлĕ çул" – ăна пĕлекен Ăс курăнмасть... Шăп çак сăлтавпа чăваш интеллигенцийĕ хăйĕн халăхĕн суранĕсене асăрхамăш пулать е мĕнле сиплемеллине пĕлеймест. Мĕн те пулин тума хăтланни – тăвăла хирĕç тута-çăвар çуркаланиччен вĕрсе тăни кăна. Чĕрчун мĕн чухлĕ пысăкрах, унăн организмĕ çавăн чухлĕ кăткăсрах: йăлтах органсем пĕр-пĕринпе çураçуллăн ĕçлеме пĕлнинчен килет. Эпĕ çакна калани те аппендикс çӳп-çаппа тулса ларнине çеç пĕлтерет. Ăна касса ывăтсан та ним те улшăнмасть. Хăтăлнă – канăçсăрлантармасть, çав кăна.

Яланхи ыйту тухса тăрать: мĕн тумалла? Мĕн те пулин тумаллах-çке-ха халăх çуратнă интеллигенцин йăх пуласлăхĕшĕн. Совĕç ăçта? Пысăка вĕреннĕ çынна пулмасан урăх кама шанас? Эпĕ хам пурнăçран питĕ те ансат сĕнӳ паратăп: никамран ним кĕтмесĕр, патшалăха ятламасăр çемьере тăван ачасемпе тăван чĕлхепе калаçмалла. Йывăр-и çак? Сывланă пек ансат! Сывламасăр пурăнаймастпăр вĕт-ха. Тертленсе çуратнă ачапа тертленсе ют чĕлхепе калаçма айван мар-çке вĕсем, вырăс чĕлхине те вĕренĕç, акăлчанла та. Пиншер çул хушшинче еплерех истори кисренĕвĕсене тӳссе ирттернĕ авалхи чĕлхемĕре паянхи куна çитерме пултарнă халăх вăйсăр тесе кам калаять? Пăхса тăрса пĕтме парăпăр-и тĕнче тĕлĕнсе тĕпчекен чĕлхемĕре? Ĕмĕрсен ылханĕ шăпах пирĕн пуç çине ӳкĕ вара. Çак каçарайми çылăха хам çине илес марччĕ тесе эпĕ кӳршĕ-аршă çине пăхмасăр ачамсене чăвашла вĕрентĕм, ӳстертĕм. Ваттисен умĕнче таса пулас килчĕ. Ачамсем хăйсен ачисене çак ытарайми чĕлхене параймасан, ылханĕ вĕсене лекĕ... Анчах эпĕ ун пек пулмасса ĕненсе тăратăп. Хама асаннепе унăн амăшĕ нимле кĕнекере çук пурнăç ăсĕ парса ӳстернĕ пек, манăн та мăнуксене, вĕсен ачисене çупăрласа çитĕнтермелĕх, хамра мĕн пуррине вĕсене памалăх сывлăх пултăр тесе тăрăшатăп. Несĕлĕмĕрсем ĕмĕртен çапла тăватă ăрăвăн чĕрĕ çыхăнăвне татмасăр пĕрле килĕштерсе, пĕр-пĕрне упраса, аслисене хисеплесе пурăнма пĕлнĕ. Çак пĕлĕве тавăрасчĕ пирĕн! Мăнуксене, вĕсен ачисене çитĕнтерме пулăшасчĕ, пил парса хăварасчĕ тесе нумай пурăнма тăрăшмалла. Пурăнас тесен сывлăха упрамалла, ĕçме-туртма, этем ĕренкинчен тухма юрамасть. Вара хирĕç саккунсем те пире чăваш пулса пурăнма чараяс çук. Халь тесен, авă, чĕлхе саккунĕ те пур, шкулсенче те вĕрентеççĕ, министерствăсемпе Республика Пуçлăхĕ те, Раççей Президенчĕ те пире темле пулăшу пама та хатĕр – хамăр путмастпăр шухăша. Çын хăй сывалас темесен умĕнче чи чаплă вунă тухтăр ташласа тăрсан та усси çук.